**Шăнкăрч вĕлли**

Куллен-кунах Мĕкĕте
Шкултан килсен каскалать:
Хăма, пăчкă тытать те,
Ку-ки, ку-ки тутарать.
Ёат-çат çапать млатукпе,
Ёыпăçтарать хăмине.
Мĕкĕте ăста аллипе
Майлать шăнкăрч вĕллине.
Килĕр, килĕр, шăнкăрчсем!
Кунта тăвăр йăвасем;
Шăнкăрч çывăх пурăнни –
Хурт-кăпшанкă тĕп пулни!
Акă, хĕртсе, выляса,
Пăхрĕ хĕвел ял çине,
Ёурхи шывсем чашкăрса
Анчĕç урам хĕррипе.
Ушкăн йăмра тĕлĕнче
Кайăк-кĕшĕк вăркăшать;
Мĕкĕтенĕн вĕллинче
Шăнкăрч йăва çавăрать
Кашни кунах, ирхине
Ача пăхать кантăкран.
Курать шăнкăрч вĕçнине,
Итлет унăн юррине.
Хĕвелтухăç хĕрелсен
Шăнкăрч хăвăрт вăранать;
Хĕвел тухса куличчен
Тĕкне-çӳçне якатать.
Вара ярать шăхăрса…
Пит илемлĕ вăл юрлать,
Ик çунатне шарт çапса
Пĕчĕк пӳртшĕн тав тăвать.

1929

*Трубина, М. Шăнкăрч вĕлли : [сăвă] / М. Трубина // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 40.*